Çĕнтеруӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

49 (7791) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Çамрăксен кунĕ

Çамрăксем, хастар пулăр!

Пурнăç малаллах шăвать, кашни çул вара шкулсенчен çамрăксем вĕренсе тухса пысăк пурнăç çулĕ çине тăраççĕ. Алла професси илсен вара ĕç биографине çырма пуçлаççĕ: пĕри – ял хуçалăхĕнче, тепри – социаллă сферăра, виççĕмĕшĕ – сутуилӳре... Малалла – çемье, ачасем... Çапла ĕмĕр тăршшĕпех çĕнĕрен те çĕнĕ утăмсем тумалла. Пурнăç çулĕ вара, çамрăксем, хастаррисене ытларах кăмăллать. Çакăн пирки ан манăр!

Н. НИКОЛАЕВА
сăн ӳкерчĕкĕ.

ХИСЕПЛĔ ÇАМРĂКСЕМ!

Сире Раççейри чи савăнăçлă уявсенчен пĕринпе – Çамрăксен кунĕпе – чун-чĕререн саламлатăп.

Çак кун эпир тивĕçлипех хамăрăн çĕр-шывăн, республикăн, районăн пуласлăхне чыслатпăр. 21 ĕмĕрте Тăван çĕр-шыв мĕнле аталанасси сирĕн пĕлӳрен, хастарлăхран, эсир ĕçлеме пултарнинчен, сирĕнте патриотла туйăмсем пулнинчен нумай килет.

Паян районта 30 çулчченхи çамрăксем пурăнакансен пĕрре тăваттăмĕш паййĕпе танлашаççĕ. Çулсеренех районти тĕрлĕ сферăра çамрăк специалистсен пĕлтерĕшĕ ӳссех пырать. «Муркаш районĕнчи çамрăксем – 2007–2010 çулсем» районти тĕллевлĕ программа пурнăçа кĕрсе пыни, ял тăрăхĕсенче çамрăксен канашĕсем йĕркеленни, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕ – çакă тата ытти те пĕтĕмпех вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çамрăксен ыйтăвĕсене татса парас, вĕсен интересĕсене хӳтĕлес тесе тунă утăмсем.

Çамрăклăх кашни çыннăн пурнăçĕнчи чи илемлĕ тапхăр кăна мар, вăл чун туйăмĕ те. Çамрăк чух ĕмĕт-шухăшсене пурнăçа кĕртесси, çĕнĕлĕхсем шыраса тупасси малта. Эсир – паянхи шкул ачисем, студентсем, çамрăк специалистсем, предпринимательсем – Раççейăн çитес вăхăтри аталану çулне палăртакансем. Эсир хастар та ăста пулнипе, тĕллевсене пурнăçлама пултарнипе районăмăр ăнăçлă аталанассине шанса тăратăп.

Сире пурнăçра активлă, мал туртăмлă, пултаруллă пулма сĕнетĕп. Телей, юрату, пур ĕçре те ăнăçу сунатăп. Уяв ячĕпе!

Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.

Пултаруллисем

«Ылтăн» та пур, «кĕмĕлĕ» те

Шкултан ылтăн е кĕмĕл медальпе вĕренсе тухни халĕ аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ чух пĕлтерĕшлĕ мар пулин те – çамрăксемшĕн хăйсемшĕн вара çакă пысăк пурнăç çулĕ çине тухмалли пĕрремĕш çирĕп утăм. Çакнашкаллисем районта кăçал пурĕ 27 выпускник.

Ылтăн медале çаксем тивĕçнĕ: Муркашри лицейран вĕренсе тухнă Надежда Кириллова, Ирина Сорокина, Муркашри вăтам шкулта ăс пухнă Анна Вязова, Светлана Иванова, Дмитрий Кузнецов, Наталья Павлова, Наталия Федькина, Алиса Федорова, Москакасси шкулĕнче вĕреннĕ Татьяна Андреева, Елена Кондукторова, Мăн Сĕнтĕр шкулĕн выпускникĕсем – Людмила Бычкова, Татьяна Ермакова, Ксения Кузьмина, Ольга Ухова, Ильинкăри вăтам шкултан вĕренсе тухакан Галина Осетрова тата Йӳçкассинчи шкултан тухакан Татьяна Иванова.

Шкултан «кĕмĕлпе» вĕренсе тухакансем пурĕ 11-ĕн: Муркашри лицейра вĕреннĕ Елена Александрова, Светлана Иванова, Татьяна Максимова, Ирина Сылгачева, Олеся Хохлова, Василий Ялушкин, Муркашри вăтам шкул выпускникĕсем – Ольга Михайлова, Виктория Яковлева, Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи Наталия Матвеевăпа Анна Ямутина, Юнкăри вăтам шкулта ăс пухнă Инесса Тепеева.

9 класран вĕренсе тухакан районти 21 çамрăк «5» паллăсемпе вĕреннине çирĕплетекен аттестат алла илнĕ.

Çак тăрăшуллă та хастар çамрăксене саламлатпăр.

Н. НИКОЛАЕВА.

Ача сачĕсенче

Пĕчĕккисен – вăхăтлăх «каникул»

Юсав ĕçĕсем пынă пирки районти хăш-пĕр ача сачĕсенче вăхăтлăх «каникул» пырать. Анчах вăл вăраха тăсăлмасть, мĕншĕн тесен юсав ĕçĕсем капиталлă мар.

Сăмахран, «Тюльпан», «Мечта», «Лебедушка» ача сачĕсенче çак ĕçсем вĕçленнĕ. Çитес вăхăтра юсав вĕçленнĕ хыççăн «Рябинушка» та ачасене йышăнма пуçлĕ. «Василекпа» «Березка» юсав ĕçĕсем тума вара çак кунсенче вăхăтлăх алăксене хупрĕç.

Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен пĕр садик та юсав ĕçĕсем ирттермесĕр юлмасть. «Малыш» ача садне çӳрекенсен çеç «каникул» кăшт тăсăлĕ: унта çĕнĕ çивитти тăваççĕ, пӳлĕмсенче юсав ĕçĕсем те иртеççĕ.

Уявра та ырăпа палăрчĕç Муркашсем

Республика кунĕнчен

Июнĕн 24-мĕшĕнче Республика кунне паллă турăмăр. Çак уява халалланă мероприятисене пирĕн район та активлă хутшăнчĕ.

Июнĕн 23–25-мĕшĕсенче республикăра «Регионсем – чикĕсемсĕр ĕçлесси» регионсем хушшинчи курав ĕçлерĕ. Уява хутшăнакансем унта «Муркаш районĕн портречĕ» электронлă презентаципе, çӳп-çап тăкмалли паянхи куна тивĕçтерекен полигона хута янине кăтартакан, «Муркаш районĕнче ялти туризмăн инфраструктурине аталантарасси» инвестици проекчĕн презентацийĕсемпе паллашрĕç.

Пирĕн район хатĕрленĕ палаткăна килекенсем çавăн пекех районта юхса тухакан шывсене тасатма усă куракан эйхорни курăкне çитĕнтернипе уйрăмах хытă кăсăкланчĕç. Çак куравра Муркаш районĕ «Чи лайăх инноваци проекчĕ» номинацире 1 вырăн йышăнчĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнче Наци музейĕн шалти картишĕнче иртнĕ декоративлă прикладной искусство маçтăрĕсен «Русь мастеровая» Пĕтĕм Раççейри конкурс иртрĕ. Унта тĕрлĕ республика представителĕ хăйсен халăхĕн культурине кăтартрĕ хăйсен ĕçĕсемпе. Чăваш Республикин чысне икĕ Муркаш хĕрĕ хӳтĕленипе, чăннипех те, мăнаçланмалла. Вĕсенчен пĕри – Москакасси ял тăрăхĕнчи Анаткас Хачăкра çуралса ӳснĕ, халĕ «Аксар» студире режиссер-оператор пулса ĕçлекен И.В. Егорова **(сăн ӳкерчĕкре)**. Унăн тĕррисемпе ӳкерчĕкĕсем, вăл ăсталанă хитре матрешкăсем, вазăсем вырнаçтарнă палатка умĕнче нумайчен чарăнса тăраççĕ уява килнисем.

– Эпĕ кашни çулах тулли кăмăлпа хутшăнатăп Республика кунне, – тет вăл.

Пултаруллă хĕр уявра пултарулăх ĕçĕнчи хăйне евĕрлĕ çĕнĕ шухăшсемшĕн диплома тивĕçрĕ.

Ирина Республика кунне 4-мĕш çул хутшăнать пулсан, юнашарти палаткăра Сĕнтĕрвăрри районĕн ăстипе пĕрле йышăннă палаткăра хăй тĕрлекен чăваш тĕррисемпе палатка патне илĕртекен Шомикри ял библиотекинче ĕçлекен М.В. Филиппова вара хăйĕн ĕçĕсемпе 1-мĕш хут Республика кунĕнче.

– Хамăн ĕçпе паллаштарма, ытти ăстасемпе паллашма эпĕ çав тери хавас, – кăмăллăн каласать вăл.

Июнĕн 24-мĕшĕнче иртнĕ уявра та Муркашсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç уяв хăнисене. «Пĕчĕк çеç путене» фестивале хутшăннă Ярапайкасси шкулĕнчи «Ярапа» ачасен фольклор ушкăнĕ лауреат пулса таврăнчĕ.

Çак кунах Оринтри Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуракăш» юрăпа ташă халăх ансамблĕ Лакрей вăрманĕнче çур сехетлĕх программăпа сцена çине тухрĕ. Тăвăллăн алă çупса саламларĕç вĕсене куракансем. Унтан «Çĕнтерӳ фестивальне» хутшăнчĕ ку коллектив.

Чăваш Наци конгресĕ ирттернĕ «Акатуй» уявĕнче вара Турай ял тăрăхĕнчи «Тăванлăх» халăх фольклор ансамблĕ туй йăли-йĕркине çав тери кăмăла каймалла кăтартса пачĕ. Кунта килнĕ хăнасем «Муркаш» халăх фольклор ушкăнĕн пултарулăхне, Муркаш Шаптакри А. Смирновăн тĕррисене курса та савăнчĕç. Муркашсем пĕçернĕ чăваш ĕçмеçимине активсе кăмăллă пулчĕç. Икĕ коллективĕ те Чăваш Тĕнчин Акатуйĕнче илемлĕхпе савăнтарнăшăн ЧНК Президенчĕн Тав çырăвне тивĕçрĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Экзамен

Вырăс чĕлхипе – 100 балл

11 класран вĕренсе тухакансемшĕн патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсем хыçа юлчĕç. Районти 287 выпускник вырăс чĕлхипе тата математикăпа экзаменсене обязательнăй йĕркепе тытрĕ.

Вырăс чĕлхипе Муркашри вăтам шкулта вĕренекен Наталия Федькина 100 балл пухма пултарнă. Ку районти чи лайăх кăтарту. Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекен Ксения Кузьмина 94 балл пухнă.

Математикăпа вара лару-тăру çакăн пек шая хăпарайман. Районти выпускниксем экзамента пухма пултарнă чи нумай балл – 77. Ăна Муркаш лицейĕнче вĕренекен Евгений Васильев пухнă.

Вырăс чĕлхипе 4 выпускник, математикăпа 5 выпускник экзаменсенче палăртнă чи пĕчĕк балл пухма пултарайман. Вĕсем резерв кунĕсенче экзаменсене тепĕр хут тытрĕç. Кăтартăвĕсем хальлĕхе паллă мар-ха.

А. ЛЕСКИНА, район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн эксперт специалисчĕ.

Саламлатпăр

Юратнă аннепе аттене – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Юлия Арсентьевнăна** юбилей ячĕпе, **Михаил Ильич Ильина** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Канлĕ ватлăх, çирĕп сывлăх сунатпăр. Пире çуратса ӳстернĕшĕн çĕре çити пуç таятпăр. Эсир пурри – пирĕн телей.

Салампа: хĕрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.

ÇЫРĂНТАРУ

Хаклă вулакансем! Райхаçата июльтен илсе тăма çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать. Паян-ыранах почтальонсемпе тĕл пулма тăрăшăр!

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр кăларăмĕ

Ĕç правине патшалăх гарантилет

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Тамара Афанасьевна АНТОНОВА:

– Районта ĕçсĕрлĕх ыйтăвне татса парассипе Чăваш Республикинче пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерессипе хушма пулăшу парасси пирки йышăннă республикăн тĕллевлĕ программине тата республикăра пурăнакансене 2007 – 2010 çулсенче ĕçпе тивĕçтерессипе йышăннă ведомство тĕллевлĕ программине тĕпе хурса ĕçлесе пыратпăр.

Кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçсĕррисем тесе 159 çынна регистрациленĕ. Ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,72 процентпа танлашать. Çулталăк планĕпе 760 çынна ĕç тупса пама пăхнă пулсан, 556 çынна ĕçе вырнаçтарнă, çулталăк планне 73 процент тултарнă. Вăл шутран 14 – 18 çулсенчи яш-кĕрĕме 355-ĕне ĕçпе тивĕçтернĕ. Республика тулашне, Раççейăн ытти регионĕсене 10 çынна (çулталăк планĕ 20 çын) ĕçлеме янă.

Ĕçсĕррисенчен хăйсен ĕçне тытăнма кăмăл туни-сем 93 çын. Вĕсем пурте тенĕ пекех ĕçе йĕркелессипе бизнес-проектсем туса хатĕрлесе тăратрĕç ĕнтĕ. Комисси ырланă проектсен хуçисене ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă 58800-шер тенкĕ укçа уйăрса паратпăр. Вĕсенчен ытларахăшĕ хресчен (фермер) хуçалăхĕсем йĕркелесе мăйракаллă шултра выльăх, сысна ĕрчетме, кроликсем, пыл хурчĕсем усрама, ял хуçалăх культурисем çитĕнтерме тытăнма, транспорт хатĕрĕсем юсакан тата техобслуживани тăвакан пунктсем уçма кăмăл тăваççĕ.

Тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухакансене тĕрлĕрен предприятисене стажировкăна ярасси, çул çитмен çамрăксене ĕç тупса парасси, обществăлла ĕç вырăнĕсем йĕркелесси, професси пĕлĕвĕ парасси çине пысăк тимлĕх уйăратпăр, вакантлă ĕç тата вĕренӳ вырăнĕсен ярмăркисене йĕркелетпĕр.

Инвалидсене те айккинче тăратса хăвармастпăр. Акă Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхран 1 инвалида ПЭВМ операторне вĕрентсе кăларса ĕç тупса пама май килчĕ.

Ведомство тĕллевлĕ программăпа пăхнă кăçалхи çур çул заданийĕсене пур енĕпе те пурнăçлама пултартăмăр. Пĕтĕмĕшле кăтартусем те çавна май япăх мар. Районта ĕçсĕрлĕх шайĕ республикăра та чи пĕчĕккисенчен пĕри, вăл чакса пырать. Кăçалхи январь – май уйăхĕсенче те ĕçсĕррисен шучĕ иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 86 çын чухлĕ чакрĕ.

«Шухăшăм тахçанах пулсаччĕ»

Çапла хуравларĕ Хорнуй ялĕнче пурăнакан Владислав Иванович Воробьев килти хуçалăхра путенесем усрама шухăш пырса кĕни пирки интереслансен. Хăй вăл çав кун ывăлне çара ăсатма хатĕрленетчĕ. Апла пулин те пирĕнпе хăй тытăннă ĕç пирки сăмах ваклама вăхăт тупрĕ.

– Чăннипе килте путенесем усрасси пирки тĕрлĕ литература та сахал мар вуланă, Интернетри материалсемпе те паллашнă. Çапах та пĕлмен-туман ĕçе пуçăнма тăхтаса тăтăм. Тепĕр енчен тата укçа-тенкĕ хывмасăр та май çук-çке. Кунта вара меллĕ самант килсе тухрĕ. Ĕçсĕрриссене хăйсен ĕçне тытăнма ĕçпе тивĕçтерекен центр пулăшать. 58 пин те 800 тенкĕ питĕ пысăк сумма мар пулин те, çĕрте выртмасть вĕт, малтанхи утăмсем тума питĕ пысăк тĕкĕ пулчĕ вăл маншăн.

Малтанах хулара 12 пуç путене туянтăм. Вĕсем валли клеткăсем ăсталарăм. Хальхи вăхăта вĕсен йышĕ 100-е те çитрĕ ĕнтĕ. Вăтам шутпа 4 ама пуçне 1 аça кирлĕ.

Çăмартаран путене чĕпписене кăларма 2 инкубатор туянтăм. Вăтамран 16 кун хушшинче чĕпсем чиперех тухаççĕ.

Эпĕ Японире туса кăларнă ăратлă путенесене ӳстеретĕп. Вĕсене çăмарташăн усраççĕ. Çавăн пекех аш-пăш валли усрамаллисем те пур. Каларăм ĕнтĕ, 4 ама пуçне 1 аça кăна кирлĕ. Çавăнпа та açасем ытларах тухсан вĕсене кайран аша яма тивет. Путене çăмарти пирки калас пулсан вара вăл сывлăхшăн питĕ усăллă шутланать, ăна хапăласах туянаççĕ. Пĕр çăмарта хакĕ 2 тенкĕрен тытăнса 2 тенкĕ те 50 пус таран.

Усрама çăмăл тесе каламастăп. Çапах та çине тăрсан, интереслансен вĕсене килти хуçалăхра пăхса ӳстерме май пур.

Путенесем валли ятарлă апат кирлĕ. Ăна Çĕнĕ Шупашкартан кӳрсе килетĕп. 1 килограмĕ 10 тенкĕ тăрать. 1 путене вара кунне 30 грамм чухлĕ çиет.

Хĕллехи сивĕ кунсенче уйрăмах асăрхануллă пулни кирлĕ. Сывлăш температури путенесем пурăнакан витере 18 – 22 градусран кая пулмалла мар.

Çавна та каласа хăвармалла. Пĕр путене çулталăкне 270 çăмарта таран тума пултарать. Унсăр пуçне тата аш-пăшĕ те пулнине шута илсен çакă япăх мар тесе шутлатăп. Шухăш-тĕллевсем вара татах пурха. Пĕвене арендăна илсе унта пулăсем ĕрчетес пирки те шухăшлатăп. Анчах та ун пирки халĕ мар. Чăвашсем каланă пек, туман тихан пилĕкне авар мар.

Сăн ӳкерчĕкре: В.И. Воробьев хăйĕн ĕçĕпе кăмăллă.

Предприятисене – стажировкăна

Хальхи çамрăксем аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕреннĕ чухнех пулас карьера пирки пуç ватма тытăнаççĕ: çамрăк карьеристăн хăйĕн пурнăç çулне мĕнрен тытăнмалла-ха? «Паллах стажировкăран!»– çирĕплетет пысăк компанисен ертӳçисенчен ытларахăшĕ.

Ним тума та çук, ĕç опычĕ çук пулсан, çамрăк специалистăн «хакĕ» ĕç рынокĕнче пысăках мар. Хĕрлĕ диплом пулни те хăвăрт ĕçе вырнаçса пысăк ĕç укçи илессине шантараймасть. Ытларах студентсен чи малтанах çак ансат чăнлăха ăса илмелле. Ăса илмелле те ... хăйсене шырамалла!

Ĕç тупма çăмăлах мар. Ĕç паракана чи малтанах ĕçе вырнаçаканăн професси хатĕрленĕвĕ, хальхи информаци технологийĕсемпе усă курма пĕлни, улшăнса пыракан ĕç условийĕсене хăвăрт хăнăхса пыма пултарни интереслентерет.

Кунта вĕренсе тухаканнисен ĕç опычĕ илме туса хатĕрленĕ ятарлă программа – «стажировка» пулăшма пултарать. Чăваш Республикинчи ĕç рынокĕнчи кăткăслăха чакарассипе 2010 çул валли йышăннă тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн ĕçпе тивĕçтерекен центрта регистрациленнĕ выпускниксене çапла майпа пулăшма пултараççĕ. Программăн çул-йĕрĕсенчен пĕри – вĕренсе тухнисен стажировки.

Çулталăк пуçланнăранпа районти ĕçпе тивĕçтерекен центра тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнисем 9 çамрăк пычĕ. Май уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле вĕсенчен 6-шне стажировкăна янă, 6 наставник çирĕплетнĕ. 22 ĕç вырăнĕ йĕркелеме 3 килĕшӳ тунă, 22 наставника явăçтарнă. Районти 4 организацине килĕшӳ тунă. Вĕсен шутĕнче «МСО «Моргаушская» ЗАО, «УК ЖКХ» ООО, «Моргаушавтотехсервис» ОАО, Муркаш райповĕ. 6 çамрăк специалист юрист, каменщик-монтажник, техник-строитель, инженер специальноçĕсемпе стажировкăна тытăнчĕ. Стажерсем çумне наставниксем çирĕплетсе тухнă. Вĕсене унăн ĕç укçи çумне хушса тӳлеççĕ. Стажировка вăтамран 6 уйăха пырать.

Обществăлла ĕçсене явăçтаратпăр

Ĕçпе тивĕçтерессипе çирĕп политика тытса пынă май 2010 çулта обществăлла ĕçсене явăçтарассипе 122 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ тата 122 ĕçсĕр çынна районти предприятисемпе, организацисемпе килĕшӳсем туса ĕçе янă. Обществăлла ĕçсем йĕркелеме 2010 çул валли федераллă бюджетран 111 ĕç вырăнĕ валли 190400 тенкĕ уйăрнă. 2010 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне çав тĕллевпе пĕтĕмпе 186940 тенкĕлĕх 25 килĕшӳ тунă. Вĕсем хушшинче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем, ял тăрăхĕсен администрацийĕсем тата ытти хăш-пĕр предприятисем те пур.

Ĕçсĕр граждансене çапла вара обществăлла тĕрлĕ ĕçсене явăçтарма май килнĕ. Вĕсем шкулсен тата шкул çулне çитмен ача-пăча муниципаллă учреждений-ĕсене тĕрлĕ ĕçсенче пулăшнă, территорисене юртан тасатнă, документсене çĕленĕ, архив тĕлĕшпе хушма ĕçсем пурнăçланă, документсем леçнĕ, территорисене тĕрлĕ тасамарлăхран тасатнă, тирпей-илем кĕртессипе ĕçленĕ.

Çул çитменнисем ытларах тимлĕх ыйтаççĕ

Кăçалхи июнĕн 16-мĕшĕ тĕлне районти ĕçпе тивĕçтерекен центра юрăхлă ĕç шыраса çул çитмен 417 çамрăк пычĕ. «14 – 18 çулсенчи çул çитмен граждансене ĕçе вырнаçтарасси çинчен» программăпа килĕшӳллĕн вĕренӳрен пушă вăхăтра çул çитмен 417 çамрăка пурне те вăхăтлăх ĕç тупса панă. Çав тĕллевпе 2010 çул валли пĕтĕмпе 556,8 пин тенкĕ уйăрнă. Пĕтĕмпе çул çитмен 655 çамрăка ĕç тупса памалла. Хальлĕхе пĕтĕмпе 281,4 пин тенкĕпе усă курнă е çулталăк заданийĕн 50,5 проценчĕ чухлĕ. Юлнă укçа-тенкĕ сумми – 275,4 пин тенкĕ. Татах çул çитмен 238 çамрăка вăхăтлăх ĕç тупса памалла пулать.

Çул çитменнисене ĕçе вырнаçтарма пĕтĕмпе 16 килĕшӳ тунă. Ĕçпе ытларах чухне пĕчĕк тупăшлă çемьесенчи çамрăксене (328) тивĕçтернĕ. 36-шĕ – тулли мар çемьесенчен, 31-шĕ – нумай ачаллă çемьесенчен.

Ĕçе вырнаçтарнă çамрăксенчен 6-шĕ çул çитмен çамрăксем енĕпе ĕçлекен инспекцире учетра тăраççĕ, 2-шĕ – йĕркеллĕ мар çемьесенчен. Ачасем ытларах пахча çимĕç суйласа тасатнă, акса-лартса ӳстернĕ, палăксемпе çар мухтавĕн обелискĕсене йĕркене кĕртнĕ, шкул таврашĕнчи территорисене тасатса тирпейленĕ.

Çул çитмен граждансене ĕçпе тивĕçтерессине Калайкасси, Муркаш, Чуманкасси, Сосновка, Çатракасси, Оринин, Юнкă, Москакасси, Йӳçкасси, Ярапайкасси шкулĕсенче, Муркаш лицейĕнче, «Аршин» обществăра йĕркеленĕ. Чуманкасси, Ярапайкасси тата Çатракасси шкулĕсенче çуллахи каникул кунĕсенче çул çитмен çамрăксен ĕç бригадисене йĕркеленĕ. Çул çитмен граждансене вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтернĕ май центр профориентаторĕ унта çӳрекенсемпе профориентаци кунĕсене ирттерессине йĕркеленĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: районти ĕçпе тивĕçтерекен центр пулăшнипе кăçал Муркаш шкулĕнче май–июнь уйăхĕсенче ĕçпе кану лагерĕ ĕçлерĕ. Унта 10-мĕш классенче вĕренекенсем çӳрерĕç. Ачасем йывăçсем, шкул пахчинче тĕрлĕрен пахча çимĕç лартассипе, вĕсене пăхса тăрассипе, территорисене тирпей-илем кĕртессипе тимлерĕç. Вĕренекенсем çу кунĕсенче лагерьте канса сывлăхĕсене çирĕплетнипе пĕрлех укçа-тенкĕ те ĕçлесе илме пултарчĕç.

5 стр.

Çĕр чăн-чăн хуçана кĕтет

Паянхи кун ыйтăвĕсемпе

Пирĕн Çĕр чăмăрĕ çинчи пурнăç пĕтĕмпех хĕвелтен килни пурне те паллă ĕнтĕ. Çĕр çинче пурнăç та хĕвĕлсĕр пуçăнса кайма пултарайман. Этемлĕх, пур чĕрĕ чун та, ӳсен-тăран та хĕвел энергийĕсĕр пурăнма пултараймасть. Анчах та çак энергипе эпир мĕнле усă куратпăр-ха?

Халĕ хĕвел энергийĕпе ял çынни епле усă курнине тишкерер. Мĕншĕн тесен шăпах ĕнтĕ вĕсем çынсене пурăнма кирлĕ ял хуçалăх продукцине туса илеççĕ. Ăна туса илесси вара хĕвел энергийĕпе усă курнипе тӳрремĕнех çыхăннă.

Чи малтанах ӳсен-тăран продукцине туса илме çĕр кирлĕ. Унпа вара тухăçлă та, тухăçсăр та усă курма пулать. Тухăçлă усă куратăн пулсан, хĕвел энергийĕпе усă курасси те тивĕçлĕ шайра. Халĕ вара эпир «тахçантанпах кĕтнĕ» капитализма çул уçрăмăр, çĕрсене валеçсе патăмăр. Анчах та çĕр хуçисем унпа тухăçлă усă кураççĕ-и-ха? Пĕр енчен илсен, çĕрĕ пур темелле. Анчах та унпа кирлĕ пек усă курма майсем çитмеççĕ. Чи малтанах ку техника тĕлĕшпе çапла. Кун пирки пур шайра та каласа çаççĕ ĕнтĕ, анчах та ыйтăва татса пама нимех те йышăнмаççĕ темелле. Çав вăхăтрах ют çĕр-шывсенчен продукци чылай турттаратпăр. Хĕвел энергийĕпе тухăçлă усă курас вырăнне чикĕ леш енне кайран тавăрма май çук энерги – газ, нефть, руда, металл т. ыт. те ăсататпăр. Апла пулсан шăпах ĕнтĕ ял хуçалăхне çĕклемелли укçа-тенкĕ çухалать.

Епле пулмалла-ха? Хресчен хăй тĕллĕн ку енĕпе нимĕн те тăваймасть. Унăн çавна валли укçа-тенкĕ çук. Витĕмлĕ пулăшу кирлĕ, çитменнине пĕр тăхтаса тăмасăр. Мĕншĕн тесен ял хуçалăх продукцине мĕн чухлĕ сахалрах туса илетпĕр, хамăрăн чĕр тавара та чикĕ леш енне ытларах та ытларах ăсатма тивет. Чикĕ леш енче вара тухăçлă ĕçлеме пĕлекен хуçасем пур пулас.

Столыпинах хăй вăхăтĕнче ял хуçалăхне укçа-тенкĕ тĕлĕшпе, тепĕр майлă каласан, пĕчĕк ставкăсемлĕ кредитсемпе пулăшма сĕннĕ. Пирĕн банксем ыйтакан процентсене пăхсан вара пуç та минресе каять. Вĕсене тӳлесе татма май çук. Кун пек условисенче пирĕн Муркаша та Канадăран тырă кӳрсе килме тытăнĕç.

Эпĕ кашни çулах Уралтан Чăваш Ене, Муркаш тăрăхне килсе çӳретĕп. Ача чухне хам çара уран чупнă уйсем çине тинкеретĕп. Анчах та мĕн куратăп-ха. Хăшĕсем вĕсем çум курăкĕпе хупланнă, вĕсемпе йĕркеллĕ усă курмаççĕ.

Халĕ пирĕн ял хуçалăхне нульрен тытăннă пек çĕнĕрен çĕклес пулать. Колхозсем хăйсен ĕçне пурнăçланă темелле. Вĕсен ĕçне малалла тăсасси пулмарĕ. Хăвăрттăн малалла каяс пулсан вара малтанхи хăвăртлăх, импульс пысăк пулни кирлĕ. Колхозсенчи база тухăçлă ĕçлеймен харпăрлăх хуçисен аллине куçрĕ. Чи малтанах халĕ тухăçлă ĕçлеме пултаракан харпăрлăх хуçисене тупас пулать.

Чăваш Енре ял хуçалăх продукцине, чи малтанах сĕте вырнаçтарасси пысăк проблема пулса тăрать. Килти хуçалăхра ĕне тытакансем сахалрах та сахалрах. Мĕншĕн тесен çуллахи вăхăтра, сĕт нумай суса илнĕ чухне, ăна сутма май çук. Ытти республикăсенче, сăмахран Тутар Республикинче, вырăнсенче сĕтрен тĕрлĕ продукци хатĕрлессине йĕркелеççĕ. Çитменнине унта сĕт сутакансене патшалăх шутĕнчен хушса тӳлесе тăраççĕ. Пирĕн Муркашра вара сĕт сутакан ял çыннисем питĕ кăмăлсăр. Сутнă сĕтшĕн те ăна пуçтаракансем ячĕшĕн кăна тӳлеççĕ, каккуй унта хушса тӳлесси пирки. Сывороткăна вара тухса тăкаççĕ, хăшĕсем тата унпа купăста калчисене шăварма ăс çитернĕ. Ку вара вăл хаклă продукци шутланать. Çавăнпа та ял хуçалăхĕ çине кая юлмасăр май пур таран пысăк тимлĕх уйăрмасăр, çĕр чăн-чăн хуçасен аллинче пулмасăр ял хуçалăхĕнче татăклă улшăнусем туса ирттерме пултарасси ик телейлĕ.

В. МАСТЕРОВ,
ĕç ветеранĕ.
Муркаш ялĕ.

Чунĕпе те хирте çĕр ĕçченĕ

Симĕс ĕç çи

Кăçал çу кунĕсем шăрăх та çумăрсăр тăни нумай пулмасть «Свобода» хуçалăха ертсе пыма тытăннă Владислав Кириллович Ананьева та канăçсăрлантармасть мар. Хирти тырă-пулă ниепле те хăпараймасть, кун пекех пулсан выльăх апатне те палăртнă чухлĕ хатĕрлесе хума йывăртарах килĕ.

Ним тума та çук. Турă паманнине çӳлтен татса илеймĕн. Вăхăчĕ вара иртет. Çавна май хуçалăхра симĕс курăка пĕрремĕш хут çулса типĕтессине анлăн пуçăннă. Вăл кăçал 501 гектар йышăнать пулсан, çак вăхăта 350 гектара яхăн çулма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ.

– Çанталăк типĕ тăнă май чи малтанах утă хатĕрлесси çине тимлĕх уйăрас терĕмĕр,– пĕлтерет хуçалăх ертӳçи.– Тепĕр эрнесенчен вара сенаж хывма та пуçăнма юрать. Тен унччен çумăрĕ те çуса парĕ-ха.

Утă кăçал выльăх-чĕрлĕх валли 706 тонна хатĕрлеме пăхнă. 260 тоннăна яхăн лупас айĕнче ĕнтĕ вăл. Çумăр курмасăр пухса хатĕрленĕ утăн пахалăхĕ аван.

Акă пĕрремĕш уй-хир бригадин нумай çул ӳсекен курăк уйĕнче ĕç вĕресе кăна тăрать. Кунти 140 гектар лаптăк çинчи люцернăна Александр Матвеевпа Николай Максимов çулса панă. Халĕ вара типнĕ курăка Меркурий Димитриев хăйĕн агрегачĕпе тавăрса паккуссене хывать. Хыççăн нумай кĕттермеççĕ – Герман Алжировпа Илья Васильев тата Андрей Чиновников механизаторсен утăна пресласа рулонсене хывмалли агрегачĕсем çула тухаççĕ. Çийĕнчех рулонсене прицеп кăкарнă автомашинăсем çине погрузчикпа тиесе утă упрамалли лупаса ăсатаççĕ. Пăхса тăнă çĕртех хир тасалса тирпейленсе пырать.

Çапла, кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Акă сиссе те юлмăпăр, часах хĕрӳ ĕç шавĕ кĕрхи культурăсен пуссисене те куçĕ.

В. ШАПОШНИКОВ.

Сăн ӳкерчĕксенче: утă турттаракан Виталий Степанов тата Геннадий Быков водительсем; Г. Алжиров, И. Васильев, А. Чиновников утă преслани çĕрте тăрăшуллă.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр кăларăмĕ

Çине тăрсан, пĕтĕмпех пулать



Муркашра Восточная урамра пурăнакан Алексей Геннадьевич Илларионов çулĕсемпе çамрăк-ха. 22 çулта кăна. Апла пулин те вăл ытти хăш-пĕр çамрăксем пек çамрăк вăхăт пĕрре кăна килет тесе «тĕнче касса» е ытти вырăнта вăхăтлăх ĕç шыраса çӳреме шутламан. Хăйĕн ĕçне аталантарма шутланă, килти хуçалăхра кроликсем тата сурăхсем ĕрчетме тытăннă.

– Районти ĕçпе тивĕçтерекен центра пысăк тав сăмахĕ каланă пулăттăм,– пĕлтерет вăл.– Хушма хуçалăха аталантарма унтан каялла тавăрса памалла мар 58 пин тенкĕ ытла уйăрса панипе усă курса ăратлă кроликсен амисене 8 тата 2 аçа, «Романовская» ăратлă 5 сурăх туянтăм, вĕсем валли усрамалли вырăн хатĕрлерĕмĕр. Ерипенех ĕç-пуç аталанса пычĕ.

Сăмах май, ĕç-пуç вара япăх аталанать тесе калаймăн. Унăн хуçалăхĕнче паян 100 пуç ытла кролик тата 20-е яхăн сурăх шутланать. Çитес çула сурăхсен йышне 50-на çитерме шутлать выльăх чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе кӳлĕннĕ çамрăк.

Паллă ĕнтĕ, выльăхсем валли апатне те хатĕрлемелле, каяшне те тасатмалла, ытти ĕçсем те сахал мар. Çамрăкăн пур ĕçе туса çитерме вăхăчĕ те çитсех каймасть. Ĕçре вара пулăшакансемсĕр мар. Тĕрлĕ ĕçре пуçаруллă çамрăка амăшĕ те, ыттисем те пулăшса пыма тăрăшаççĕ. 80 çулхи М.Р. Илларионова асламăшĕ вара сурăхсене улăх-çаранра кĕтсе çӳрет.

– Паллах, пушă вăхăт сахалрах ĕнтĕ. Ытларах чухне хĕвел тухиччен те кроликсем валли симĕс курăк çулма тухса кайма тивет. Апла пулин те эпĕ ӳпкелешме шутламастăп. Ялти пурнăç яланах çапла пулнă вĕт-ха. Çитменнине выльăх патне чун туртать пулсан, канлĕ пурнăç пирки шухăш та пулаймасть тесе шутлатăп,– тет Алексей Илларионов.

Сăн ӳкерчĕкре: А.Г. Илларионов хăйĕн юратнă кроликĕпе тата сурăхĕсемпе.

Ăсталăха туптама май пур

Ĕççĕр тăрса юлнă граждансене çĕнĕ, ытларах ыйтакан профессисене вĕрентесси, вĕсен квалификаци статусне ӳстересси ĕç рынокĕнче ĕç вăйĕсемпе вĕсене ыйтни хушшинчи шайлашăва йĕркелесе пыма май парать.

Ĕççĕр граждансене професси тĕлĕшĕнчен вĕрентессипе ĕçпе тивĕçтерекен центр асăннă службăна йĕркеленĕренпех ĕçлесе пырать. Ĕççĕррисене професси пĕлĕвĕ парасси ĕçпе тивĕçтерессин политикин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çапла майпа ĕç рынокĕнче хальхи вăхăтра ытларах ыйтакан профессисемпе квалификацисене вĕрентсе хатĕрлетпĕр. Ытларах чухне кунта профессин хушма вĕрентĕвĕ пирки сăмах пырать. Унăн виçĕ варианчĕ пирки асăнса хăварни вырăнлă: професси тĕлĕшпе вĕрентесси, çĕнĕрен вĕрентесси тата квалификацие ӳстересси. Пурте вĕсем ĕççĕррисен конкурентлăхне ӳстерме, ĕççĕр юлнипе çыхăннă пăлханусене сирме пулăшаççĕ. Ĕçлеме пултаракан çынсен шучĕ чакса пынă май ĕçпе тивĕçтерекен центрăн çак ĕçĕн пĕлтерĕшĕ ӳссех пырать.

2009 çулта професси вĕрентĕвне ĕççĕррисене 65 çынна янă. 2010 çулхи январь–май уйăхĕсенче ĕççĕррисем 82 çын вĕренме тытăнчĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ «1 С: Предприяти», электрогазосварщик, экскаватор машинисчĕн, сутуçă-кассир, парикмахер, автомашина водителĕн, тракторист-машинистăн тата ытти профессисене алла илеççĕ. 2010 çулта вара пĕтĕмпе профессие вĕренме районти 100 çынна яхăн яма палăртнă. Çавна валли 747275 тенкĕ уйăрса параççĕ. Ĕççĕррисене вĕренме ĕçпе тивĕçтерекен центр ярать пулсан, тăкаксене те вăлах саплаштарать. Центр вĕреннĕшĕн кăна тӳлемест, çавăн пекех вĕреннĕ пĕтĕм тапхăрта законодательствăпа пăхнă виçепе стипенди те тӳлесе тăрать.

Мĕнле професси килĕшет?

15 çул каялла шкулсенчен вĕренсе тухакансене кирлĕ професси суйласа илме çăмăлах пулман. Вĕсем профессисен анлăшĕпе те кирлĕ пек паллашма пултарайман. Ытларах чухне вара шкултан тухакансем компанишĕн тенĕ пек вĕренме кĕнĕ. Хыççăн вара хăшĕсем пĕрремĕш курсрах вĕренме пăрахнă, тепринсем урăх профессипе вĕренме тытăннă. Хăйсен профессийĕпе ĕçе вырнаçакансем сахал пулнă.

Халĕ лару-тăру улшăнчĕ. Темиçе çул ĕнтĕ ĕçпе тивĕçтерекен центр пулăшнипе шкул ачисен чăннипех те хăйсене юрăхлă профессие суйласа илме май пур. Ĕçпе тивĕçтерекен центр 9–11 классенчен вĕренсе тухакансем валли тăтăшах информаци кунĕсем ирттерет. Ялан тенĕ пекех ку мероприятисене представительсем 2 вĕренӳ заведенийĕнчен кая мар хутшăнаççĕ. Çапла майпа ачасен вĕренӳ заведенийĕсен преподавателĕсемпе уçăн калаçма, хăйсене интереслентерекен ыйтусем çине тулли хуравсем илме май пур.

Ыйтусем вара питех те нумай. Вĕренекенсем вĕренӳ вырăнĕсен ярмăркисенче пур профессисем, вĕренӳ условийĕсемпе мелĕсем пирки пĕлеççĕ. Кăçал кун пек тĕл пулусене Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн тата Чăваш патшалăх педагогика университечĕн представителĕсемпе йĕркелерĕмĕр. Вĕренекенсене преподавательсем вĕренӳ формисем, вĕренме кĕмелли условисем, общежитире пурăнмалли йĕркесем, вĕренсе тухнă хыççăн ĕçе вырнаçас ыйтусем пирки каласа пачĕç. Кунпа пĕрлех ĕçпе тивĕçтерекен центр тĕрлĕ профессисем пирки буклетсемпе памяткăсем валеçсе пани те пĕлтерĕшлĕ пулчĕ. Кунта 292 вĕренекен хутшăнчĕ.

Вĕренӳ тата вакантлă вырăнсен ярмăркисене ирттерни 14–18 çулсенчи çул çитмен çамрăксене çуллахи каникул вăхăтĕнче ĕçпе тивĕçтерес тĕлĕшпе те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Апрелĕн 21-мĕшĕнче те кун пек ярмăркка иртрĕ. Унта 400 вĕренекен тата ĕç паракансем 68-ăн хутшăнчĕç.

Хĕрлĕ ӳтлисем те, Санта Клаус та пулнă

Каникул

Хула тулашĕнчи лагерьсенче 1 сменăра каннă хыççăн çак эрнере районти 80 ача каялла таврăнчĕ. Июнĕн 23-24-мĕшĕсенче тата тепĕр 80 ача Шупашкар районĕн территорийĕнче вырнаçнă «Чайка» тата хамăр район территорийĕнчи «Березкăпа» «Утес» лагерьсене 2 сменăра канма тухса кайрĕç.

Çак кунсенчех шкулсем сумĕнче йĕркеленнĕ профиль тата сывлăха çирĕплетмелли лагерьсем хăйсен ĕçне вĕçлерĕç.

Кашмашри тĕп шкулта лагерь ĕçне çӳллĕ шайра ирттерме, кашни кун ачасен асĕнче юлтăр тесе тăрăшнă. Лагерĕн интереслĕ ĕçĕ пирки редакцие лагере ертсе пыракан Е. Павлова, А. Федорова тата Е. Ершова воспитательсем, лагере çӳрекен М. Ишакова çырса пĕлтерчĕç.

Сывлăха çирĕплетмелли «Росинка» лагере çӳрекенсем акă ятарлă костюмсемпе маскăсем хатĕрлесе пĕр кунлăх хĕрлĕ ӳтлисем те пулса курнă. Тĕрлĕ йăхсем шалашсем туса та ăмăртнă, пĕрпĕринпе вăй та виçнĕ.

Тепĕр кунхине çак ачасемех кĕнеке тусĕсем пулса тăнă. Тĕрлĕ конкурс-викторинăсенче Марта Ишаковăпа Виктория Тихонова çĕнтернĕ. Виççĕмĕш кун вара ачасем патне юмахсенчи паттăрсем «килнĕ», хăйсем çинчен ачасем мĕн пĕлнине уйрăмах Санта Клаус **(Ред.: тепĕр тесен мĕншĕн хамăрăн тăван Хĕл Мучи мар-ха?)** тĕплĕн тĕрĕсленĕ.

Ачасемшĕн спорт кунĕ те интереслĕ пулнине пĕлтереççĕ Кашмаш шкулĕнче ĕçлекенсем. «Хĕвел» тата «Асамат кĕперĕ» отрядсем спортăн тĕрлĕ тĕсĕсенче ăмăртнă. «Хĕвел» ачисем чăнах та «вĕрирех» пулнă мĕн – тантăшĕсене çĕнтернĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Милици хроникинчен

«Предпринимательсене» явап тыттарнă

«Суррогат» операци ирттернĕ вăхăтра районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем Çулав ялĕнчи пĕр хĕрарăма тата Мулкачкассинче пурăнакан икĕ «предпринимателе» тытса чарнă. Вĕсем спиртлă шĕвек сутассипе «ĕçленĕ» иккен. Çакă «пурăнма пĕлекенсене» тухăçне те сахал мар панă пулĕ-ха, кĕленче туянакансен çемйисене вара – куççуль кăна. Çын куççулĕ çинче телей тăвакансен халĕ Чăваш Республикин 22 № саккунĕпе килĕшӳллĕн явап тытмалла пулать.

«Кама пăчкă кирлĕ?»

Çапла ыйтса çӳренĕ Ильинка ял тăрăхĕнчи Ойкас ялĕнче бензинпа ĕçлекен пăчкăсемпе сутă тăвакансем. Камсем тетĕр-и? Чикан национальноç çыннисем. Пăчкăсен нимĕнле документ та пулман вĕсен. Айвансене шыранă пулĕ те-ха сутуçăсем, хăйсем вара милици сотрудникĕ умнех тухса тăнă. Вĕсене Раççей Федерацийĕн Административлă право нормисене пăснин кодексĕнче палăртнă тăрăх явап тытмалла.

Асăрхануллă пулăр. Чикан çыннисенчен кирлĕ-кирлĕ мар япалана йӳнĕ тесе ан туянăр.

Стройматериал «тарнă»

Юсав ĕçĕсене ирттерме туяннă кирлĕ материалпа хыççăнах усă курмасан ăна тартма та пулать иккен. Çапла пулса тухнă та Атăл хĕрринчи ялта. Цинкпа витнĕ тимĕр листисене кил хуçи хулара пулнине пĕлсе вăл киличчен «тирпейлекенсем» тупăннă. Кил картишĕнчи 69 листана çурăм çине хурсах çĕклемен пулĕ-ха вăрăсем. Ăна следстви татса парĕ.

Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Наркоманипе наркобизнеса хирĕç

Серепене лекмелле мар

Наркомани. Çак сăмах каланă чухнех хăрушă илтĕнет, ĕçĕ вара – татах та хăрушăрах. Тĕнчипе сарăлнă серепене хамăр кăна мар, ачасем те, маллахи ăрусем те ан лекчĕр тесен, наркомание хирĕç кĕрешессине кашнийĕнех хăйĕн тӳпине хывмалла. Правăна сыхлакан органсем тата вăй структурисем çине кăна шанни тĕрĕсех мар пулĕ.

Ку тĕлĕшпе профилактика ĕçне тĕллевлĕн пурнăçласси – районти шалти ĕçсен пайĕнче паянхи тĕп ĕçсенчен пĕри. Наркотиксен саккунсăр çаврăнăшне хальлĕхе районта палăртман. Криминаллă милици уйрăмĕн ĕçĕн иртнĕ çулхи кăтартăвĕсем республикăри ытти районсенчен те, республикăри вăтам кăтартусенчен те лайăхрахчĕ. Çапла йĕркеленĕ ĕçе тата кăтартусене малашне те эффективлă та оперативлă ĕçленипе тытса тăрассипе тимлеççĕ паян сотрудниксем.

Наркомание хирĕç кĕрешесси пирĕн районта ытларах «Мăкăнь» операци çине тайăнать. Июль-сентябрь уйăхĕсенче преступленисем ытларах пулни паллă ĕнтĕ. Урăх вырăнта пурăнакансем те Муркаш тăрăхне килсе мăкăнь пухнине ытти çул та палăртнă. Апла кашнийĕнех тимлĕ пулмалла.

Районти шалти ĕçсен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх Раççей Федерацийĕн административлă правăсен нормисене пăснин кодексĕн 10.5 статйипе (РФ контрольлесе тăма йышăннă наркотиксен, психотроплă хутăшсен переченне кĕртнĕ ӳсен-тăрансене пĕтерменни) кăçал 1 тĕслĕх тупса палăртнă та ĕнтĕ. Çак кодексăн 6.9 статйинче палăртнă преступление туни (врач палăртмасăр наркотик хутăшĕсемпе усă курни) 2 тĕслĕх пулнă.

Шалти ĕçсен пайĕнче учетра пурĕ 19 çын тăрать, вĕсенчен 6-шĕ – Муркашри тĕп больницăри нарколог патĕнчи учетра. Хальхи вхăтра çак 19 çынран 7-шĕ – ирĕкрен хăтарнă вырăнсенче.

Наркотиксем сутнине, хатĕрленине сисетĕр пулсан, мăкăнь ӳсен-тăранне пухнине куратăр пулсан çийĕнчех районти шалти ĕçсен пайне 62-6-67 е 02 номерсемпе шăнкăравлăр.

Н. АНДРЕЕВА.

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 6-6.

Архитектурно-строительное проектирование, систем электро-, водо-, газоснабжения. Составление смет. Свид. СРО.
ООО «Интертехсервис». Моргауши, ул. Мира, 9. Тел.: 62-6-03, 8-903-345-75-76.

Прогноз погоды с 26 июня по 2 июля www.yandex.ru

сб 26	вс 27	пн 28	вт 29	ср 30	чт 1	пт 2
ясно	переменная облачность	переменная облачность	ясно	ясно	ясно	ясно
+35	+36	+32	+23	+21	+25	+28
+20	+22	+15	+11	+9	+11	+13

Инженер-сметчик

Администрация Моргаушского района объявляет об открытии вакансии на должность главного специалста УКС, архитектуры и ЖКХ администрации Моргаушского района.

Требования: высшее образование по строительной специальности, знание ПК. Тел.: 62-1-45.

* * *

Пилĕк пăруланă хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп, январьте пăруламалла. Сурăхпа такине сутатăп. Тел.: 60-1-44.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352) 52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 31-38.

* * *

Рулонти (400 кг) типĕтнĕ утă сутатăп. Хакĕ 1200 тенкĕ. Тел.: 8-927-862-01-55. 1-2.

* * *

Продаю деревянный пятистенный дом с надворными постройками и земельный участок 0,41 га в с. Тиуши. Тел.: 8-960-302-54-16.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.

* * *

Продается трактор ЮМЗ, большая кабина, прицеп, плуг, культиватор, косилка роторная, окучник. Комбайн «Нива» плюс ЖРБ. Все в рабочем состоянии.
Тел.: 8-960-307-09-20, 8-905-197-46-88.

* * *

Услуги буровой машины для рытья колодцев, разного диаметра, с доставкой и установкой колец.
Тел.: 8-903-379-09-01. 4-5.

* * *

Продаем торф, навоз, грунт, ОПГС, песок, щебень, асфальт с доставкой в короткие сроки. Оказываем автоуслуги. Тел.: 44-22-24, 8-905-343-91-07. 5-9.

* * *

Продаю блоки керамзитобетонные, песок, гравмассу, бой кирпича, с доставкой.
Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 5-5.

* * *

Ноябрь вĕçĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хура ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-993-60-29.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 8-8.

* * *

Раствор, бетон, керамблоки от производителя, цемент. Доставка. Тел.: 8(8352)507-805, 8-903-358-65-34, 8-903-345-66-34. Сертифицировано. 12-17.

* * *

Требуются бригады рабочих для работы с мягкой кровлей в Нижний Новгород. Тел.: 89373927300. 5-5.

* * *

Июль уйăхĕнче пăруламалли тынашки сутатпăр.
Тел.: 61-5-23, 8-937-397-47-10.

* * *

Продаю кольца колодезные. Цена 1500 руб., с доставкой. Бурение колодцев. Тел.: 89876664140. 4-9.

* * *

Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой.
Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 6-8.

* * *

ООО «Лотос» продает: мотоблоки, столбы для ограды диам. 60 мм тол. 5 мм – 1 пог. м. 120 руб., профнастил крашеный – 1 пог. м. 260 руб., профнастил оцинкованный – 1 пог. м. 210 руб., сетка-«рабица» от 400 руб., сахар 1 мешок (50 кг) – 1500 руб., мука 1 мешок (50 кг) – 650 руб., профиль 40х20 – 1м 50 руб. Доставка 5 руб./км. Тел.: 8-917-665-27-26. 2-5.

* * *

Çиччĕмĕш пăрулмалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-905-345-66-72, 8-908-307-09-44.

* * *

Пĕрре пăруланă хура-шурă тата хĕрлĕ-шурă ĕнесем, тынашкасем сутатăп. Тел.: 67-2-50, 8-906-385-45-21.

«Муркаш районĕнчи выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци» патшалăх учрежденийĕ кунти ветеринари лабораторийĕнче ĕçлекен выльăх тухтăрĕн Е. Толикинăн ашшĕ

Михаил Михайлович БАШМАКОВ

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А сурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал сырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 25.06.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.